# Илпек М. Тăпру çăмăл пултпăр

Куç умĕнчех вилсе кайрĕ пирĕн Хусанкай, чăваш халăхĕн аслă поэчĕ, пысăк пиччемĕр, тăван сăмахăн ытарайми асамçи.

Сарлака çамки ăшăччĕ-ха, аллисем те хытма ĕлкĕрейменччĕ, сывлĕ-ши, тата сывлĕ-ши тесе чăтаймасăр тенĕ пек кĕтсе тăтăмăр та кĕтсе илеймерĕмĕр. Хĕрхенӳсĕр Вилĕм Петĕр Хусанкайăн чаплă та паттăр пурнăçне Вăхăтсăр татса кайрĕ...

Кам шутлатăр иккен, кам ĕнентĕр халех çапла пулса тăрасса! Сăнне-питне пăхсан вăл чăн чăвашла илемлĕччĕ - йăлтăр хура куç та кăтра çӳç, сасси те халĕ те хăлхара янăранă пек, чун хавалĕпе калаçать-и, çĕкленсе кайса сăвă вулать-и, юрлать-и юлташĕсемпе пĕрле, кулса шăпалтатать-и - хăйне вăл пысăк çын теместчĕ, пĕчĕк теместчĕ - ваттипе вată, çамрăкпа çамрăк, ачапа ача - çавăн пекчĕ пирĕн Петĕр пичче.

Мĕнле чăваш çыннишĕн авторитет пулман-ши вăл! Ученăйсем ун сăввисене пăхмасăр калаççĕ, рабочисем ун шухăшĕпе сăмах тытаççĕ, колхоз ĕçченĕсем ăна хăйсен чи çывăх тăванĕ вырăнне картаççĕ. Хусанкай - пуриншĕн те Хусанкай - аслă поэт, ăста ăсхакăл мулĕ. Вăл кирек хăçан та ĕмĕр ĕмĕрех - Петĕр Хусанкай.

Чавашсем авал хӳхлет-чĕç: «Шăпчăк килĕ çурхи кун - эс нихçан та килес çук, хĕвел тухĕ ăшăтса - эс ăшăнса тухас çук, тĕнче юрлĕ савăнса - эс савăнса юрлас çук...»

Эпир ун пек каламăпăр. Авалхи чăваш сăмахĕпех ăна эпир «Эс вилсем те - вилмен!» тесе пĕтĕм çут тĕнчене илтĕнмелле янăратса евитлетпĕр. Унăн çĕршер те çĕршер сăввисем, вун-шар та вуншар поэмисем, çитмĕл те Çичĕ Тилли юррисемпе халапĕсем, легенди-сем, манăçми «Аптрамансен» романĕпе çулăмлă статйисем - тăван халăхăн ĕмĕрсене хывăнса юлăнакан ăсхакăл мулĕ. Çавсем вĕсем - халăхăн чаплă ывăлне тивĕçтерекен чи сăваплă палăк. Упрар çавна. Куç пек. Чун пек. Емĕрсем валли. Çитес сыпăксем валли. Пыр тĕпне куççуль кӳмеркки капланнă пулĕ: калас тенĕ сăмахăм çыхăнмасть, шухăшăм пăтрашăнать, мăшăр куçăмран тумлам хыççăн тумлам сăрхăнса шăрçан шăрçаланса анать.

Ак кĕтмен çĕртен аса илетĕп вăрçăран таврăннă кунсене. 1948 çулхине Чăвашсен кĕнеке издательствинче Петĕр Хусанкайăн çĕнĕ кĕнекине кăлараççĕ те, сăнӳкерчĕкĕ çук, терĕç. Хусанкай килсе кĕчĕ, ал айĕнче унăн та чипер ӳкерчĕк çук иккен.

- Ак çак юрамасть пуль! - кăлтăрт кăлартăм эп чĕре тĕлне витекен кĕсъемрен Хусанкай сăнÿкерчĕкне.

— Эс..  ăçтан тупрăн кăна? Ман хамăн çук-çке вăл?

— Астăватна, Петĕр пичче, вăрçă пуçлансан тăваттăмĕш кунхине...

Астуса илчĕ-илчех вăл. Çав канăçсăр каçхине мана хăйĕн чипер фотоÿкерчĕкне пачĕ те:

—Чăрр, çакăн пек калаçса татăлатпăр: вăрçăра фашистсене аркатса тăкнă хыççăн тăван Шупашкара таврăнатпăр та эс мана çак ÿкерчĕке каялла тавăрса парăн, - терĕ.

Каялла тавăрса парасси вăл çавăн пек кăначчĕ-ха. Чăваш хăйĕн ывăлне вăрçа ăсатать иккен те, çуртран кашăк парса ярать, тăван çурт кашăкĕ. Каялла чипер таврăнма ырă çул сунать вăл. Ку та çавăн пек йăла-йĕркепе пулчĕ.

Ак халĕ шăпах тавăрса памалли вăхăт çитрĕ. Фотографсем çав ÿкерчĕкрен тепĕр хут ÿкерсе илчĕç те Петĕр Хусанкайăн «Сăввисемпе поэмăсем» кĕнекине вырнаçтарчĕç. Эпĕ çав ÿкерчĕке çичĕ çул хушши кăкăр кĕсйинче усраса пĕтĕм Европăна урлă та пирлĕ каçрăм, пурпĕрех Шупашкара илсе таврăнса ăна ĕçе кĕртме пулăшрăм...

Асаилÿсем... Томсем çырма пулĕ те вĕсем пирки, паянхи ĕç мар-ха вăл. Суранăмăр ытла пысăк, ăна халăх куççулĕпе çуса тасатма çук, сиплейместĕн, тухнă хĕвелĕн çулне каялла çавăраймас-тăн...

Мĕнле çунатлă ĕмĕтсем çиçетчĕç унăн ăслă таса пуçĕнче!

«Эп философиллĕ сăвăсем çырма тытăнтăм. Ытларах çырасчĕ-ха»...

Унăн ахаль те философиллĕ сăввисем нумай.

«Сиктĕрме чăвашĕсем çинчен прозăпа роман çырса пăхас тетĕп. Мĕн калăн эс?»...

Мухтассинчен ытла мĕн калас?

«Паттăр иртрĕ-çке пирĕн! çамрăклăх кунĕсем? Шекспир ун пирки паттăрла трагеди çырнă пулĕччĕ... Хамăнта тытăнса пăхас мар-ши?..»

Мĕнле кăна ĕмĕт çунатлантармасчĕ-ши ăна?

Чи хакли вара çакăччĕ. Хусанкай кирек хăçан та хăй сăмахĕ çине тăратчĕ. Пурнăçĕнче çирĕп режим тытатчĕ пулсан та эп ăна кровать çииче е диван çине тĕренсе выртнине пĕртте астумастăп Кунне-çĕрне хисеплемесĕр ĕçлетчĕ вăл - çыратчĕ. вулатчĕ, халăхра çÿретчĕ, сăвăсем калатчĕ, - пуйăспа пынă чухне те вăл манăçми сăвăсем хывмашкăн ăс та, меслет те çитеретчĕ.

Чĕре кӳтсе сурать пулин те, вилнĕ çын хыççăн эп те ӳксе вилем-ха, тесе калама хушман пире. Петĕр Хусанкай пĕтĕм хăйĕн поэзи тĕнчипе социализмлă телейлĕ пурнăçăн чаплă йыхравçи пулчĕ, вăл пирĕн ăсхакăл хăвачĕ, кулленхи таса яллавăмăр. Ахальтен мар вăл хăйĕн биографиллĕ пĕр сăв винче ак çакăн пек каларĕ:

«Тĕрен тивмен çĕре ман йывăç акапуçĕ
Хуратрĕ çĕклесе пайтах асаппалан:
Кăкланчĕ ерипен пиншер çулхи кăлкан:
Кайран тухнисене акмашкăн çăмăл пулĕ».

Мĕн калас пур, Петĕр пичче, çак сехетре сăмах хăвачĕ çитерме те хĕн: йывар тăпру çăмăл пултăрах!

*Коммунизм ялавĕ. - 1970. - 6 март.*